26-21

И. ВИКТОРОВ

ИРӖКЛӖХШЕН ÇАПӐÇАКАНСЕМ

(ПИЕССӐ)

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СОЮЗА ССР

И. ВИКТОРОВ.

БОРЦЫ ЗА СВОБОДУ.
ДРАМА В 3 ДЕЙСТВ.

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ.

Пӗтӗм тӗнӗери пролеттарисем, пӗрлешӗр!

И. ВИКТОРОВ.

ИРЕКЛЕХШЕН ÇАПАÇАКАНСЕМ

3 ПАЙЛĂ ТРАМĂ.

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СССР.
МОСКВА — 1926.

Книга набрана и отпечатана на Книжной фаб-ке Центрального Издательства народов С. С. С. Р. Москва, Шлюзовая наб., 162, в количестве 2.000 экз. Главлит № 53524.

— Патша вăхăтĕнҫе ĕҫ халăхĕшĕн тăрăшса, ревоҫутсишĕн тĕрмесенҫе, каттăркăра пĕтнĕ йулташсене асăнса.

И. Викторов.

ТРАМĂРИ ÇЫНСЕМ:

1. Ваӈук — 24 çулта, вĕреннĕ çын, революционер, шухăшласа калаçаť, ытлашши ваклама йуратмасť.

2. Мишша — 26 çулта, хăравçăрахскер, Ваӈукпа пĕр шухăшлă.

3. Анук — 19 çулта, хулари шкулта вĕренекен хĕр, Ваӈук йăмăкĕ, тăнлă калаçаканскер.

4. Йеӈук — 18 çулта, Анук йулташĕ, пĕрле вĕренекенскер, Анукпа пĕр шухăшлă.

5. Становой пристав — 55 çулта, саккун йĕркине лайăххăн пĕлеймест, сăтĕле пуçланăскер.

6. Василий Иванович — уретник — 35 çулта, йĕркеллĕ çын, мăн кăмăлласкер.

7. Иванов } — страшниксем.
8. Куçмин }

9. 1-мĕш ристан.

10. 2-мĕш ристан.

Политсисем, ристансем, салтаксем, халăх (арçынсем, хĕрарăмсем).

Выӈани Йаппун вăрçи иртсен 1917-мĕш çулти революцци хушшинӈе пулаť. Малтанхи пайĕ 1908-мĕшпе 1914-мĕш çулсен хушшинӈе, иккĕмĕш — 1914-мĕш çулта, йулашки — 1917 çулта пулаççĕ.

ПЁРРЕМЁШ ПАЙЁ.

Çёрле. Ваҥук пӳрҫё. Стсенӑ тёпёнҫе, тата суллахайра пёрер алӑк. Сылтӑмра путмар (сарлака сак), ун патёнҫе сётелпе тенкелсем. Ҫаршав уçӑлнӑ вӑхӑтра Ваҥукпа Мишша тёпёнҫи алӑкран пырса кёреççё тё алӑка кёле хураççё.

1-МЁШ КУРӐННИ.

Ваҥук (уткаласа çӳресе). Пирён малашне килте пурӑнма май килмест, ӑçта та пулсан йалтан тухса кайас пулаҭ.

Мишша. Йӑмӑксене мёнле ёçлемеллине кӑтартса хӑварсан, йалтан вёçтерме те йураҭ.

Ваҥук. Апук ӑçта кайнӑ-ши? Вӑл пулнӑ пулсан халёх Йеҫук патне йараттӑмӑрҫё. Çаплах ёнтё, йӑмӑксене çул кӑтартса хӑварсан айаккалла шума та йураҭ.

Мишша. Ӑçта кайса вырнаçӑпӑр-ши ёнтё?

Ваҥук. Мён шухӑшласа тӑмалли пур? Хаҫ çула пирён ваҫҫи таçта та вырӑн пур. Кайар, йулташ, вӑрмана; унта пире никам та, нихӑçан та тупас çук. Ирёк çёртре ирёккён хамӑр ёçе ёçлёпёр, куштан-пуйан аллинҫен ҫасах епир хӑтӑлӑпӑр. Йанварён 9-мёшёнҫе тӑкӑннӑ йуншӑн патшапа унӑн тарçисене тавӑрса парӑпӑр, ёç халӑх нуша курнипе çитё: ирёкре пурӑнма та пултараҭ.. Хӑвах куратӑн, йулташӑм, мёнле вёсем пурне те хёстерме пуçларёç. Ёслекенсене вырӑнтан кӑлара-кӑлара йаҫёç, хресҫенсенҫен куланай нумай шайара пуçларёç. Çуксенне выҫӑхёсене тытса кайса йурра хӑвӑраççё, тӳлеме нимён те пулмасан, саламатпа кутран çунтараççё. Çитет капла асапланса пурӑнни!.. Мён ҫухлё халӑх

тĕрмере çĕрет, таса ĕçшĕн, хăйне кирлине ыйтнăшăн тĕттĕм çĕрте ырă куна [курмасăр хăйĕн ђунне кăлараť. (Ђарăнса тăраť). Ех, Мишша, çакăнта çав йун ĕçекенсем пулас пулсан, хаљ мăйĕнђен пăђăртаса вĕлерĕттĕм. (Алăка шакăртаттараççĕ). Кам унта?

Сасăсем. Уçăр, епир.

Ваљук (уçса). — А-аа! Сире пайан кĕтни!.. (Анукпа Йељук кĕреççĕ).

2-МĔШ КУРĂННИ.

Мишша. Сирĕн пĕр çылăх та çук пулмалла. Сăмах çинех килтĕр.

Анук. Епĕ Йељук патне кайса ларнă-ђђĕ те...

Ваљук. Епĕ хаљ анђах Йељука мĕнле систерес-ши тĕрĕм. Сăмах çинех килтĕр.

Йељук. Еп сире мĕн тума кирлĕ-ђĕ вара?

Ваљук. Йăмăксем, пирĕн малашне килте пурăнма çук. Пире кашни самантрах килсе тытма пултараççĕ. Пайан епир Мишшапа политси шăтăкĕсене кайса куркаларăмăр. Вĕсем пĕтĕм вăйĕпе çĕр çывăрмасăр пире пĕтерме тăрăшаççĕ.

Анук (хăраса). — Хăçан пĕтĕç-ши вăл тискерсем?

Ваљук. Мĕн пур ĕç халăхĕ пĕрлешмесĕр вĕсем пĕтес çук. Çавăнпа та пирĕн пĕтĕм вăйпа тăрăшмалла. Анђах, епир ĕнтĕ сирĕнпе пĕрле ĕçлеме пултараймастпăр. Есир те пулсан, пĕђђене йулсан, çак пуçласа йанă ĕçе ан пăрахăр, ђĕртсе йанă вутта ан сӳнтерĕр.

Анук. Тусăм, пиђђесенђен вăхăтлăха, йе ĕмĕрлĕхе (сасси ђĕтрет) уйрăлса йулатпăр, анђах ĕçе хамăрăн вăй çитнĕ майĕпе малалла йама тăрăшăпăр.

Йељук. Пирĕн шухăшсем пĕрле те, пире кам çул кăтартса парĕ-ха?

Анук (сĕтел çинђен кĕнеке илсе). Акă вăл — пире çул кăтартаканни. Кĕнеке пире çан тĕрĕс çулпа йертсе пырĕ.

Ваҫук. Тӗрӗс, йӑмӑкам, тӗрӗс. Кӗнеке сире ҫӑн тӗрӗс ҫула кӑтартӗ. (Шухӑшласа) — Пӗрре те сире пӑрахса кайас килмест, килте пурӑнма та май ҫук. Вӗсем пур шӑтӑка та шырасан, тупаҫҫӗ — тупаҫҫех.

Мишша. Килтен каймасан май килес ҫук.

Анук. Сирӗн ваҫҫи вырӑн пур...

Йеҫук. Ҫут тӗнҫе пысӑк.

Ваҫук. Епир хӑрамастпӑр, анҫах есир никама систермесӗр ӗҫлеме тӑрӑшӑр. (Сехет 2 ҫапаҫ). Вӑхӑт ҫитрӗ. (Сасси ҫӗтрет). Пире тытма пайан икӗ сехет иртсен килмелле... Сыв пулӑр. Йулташ, аҫа, кайӑпӑр. Ан хӑрӑр, сирӗн ӗҫе никам та сисеймӗ. (Хускалаҫ). Пуҫланӑ ӗҫе ан манӑр... Ех, йӑмӑксем!.. Сыв пулӑр. (Анукпа Йеҫука ҫуп тӑваҫ те тухса кайаҫ).

Мишша. Ҫипер йулӑр, лайӑх ӗҫлӗр. (Тухса кайаҫ).

Ваҫук (алӑка уҫса). Кӗнекесене пытарӑр. Татах сыв пулӑр.

3-МӔШ КУРӐННИ.

Анук. Ех, Йеҫук... (Ӑна ыталаҫ). Ҫухалӗҫ пирӗн тӑвансем. Мӗнле иртӗ ӗнтӗ пирӗн пурнӑҫ? (Ҫарӑнса тӑраҫ). Ҫук... ытлашши хуйхӑрма йурамасӑ. Вӗсем, сывӑ пулсан, пире пӑрахас ҫук... (Хӗпӗртесе). Ӗнтӗ, тусӑм, хамӑр ӗҫе кӑтартар, уншӑн хытӑ тӑрӑшар.

Йеҫук. Иксӗмӗр те пӗр хӑрамасӑр ӗҫлӗпӗр. Пиҫҫесем калана сӑмахсем, вӗсем пире вӗрентни пирӗн асран кайас ҫук...

Анук. Вӑхӑт нумай пулҫӗ, выртас пуҫ ӗнтӗ. Ҫим-ха, кӗнекесене тухса хурар. (Кӗнекесене йӑтса тухаҫ те ҫасах кӗрет).

Йеҫук. Ҫывӑрах, тусӑм. Епӗ те киле кайам. (Тепӗр пӳлӗмӗнҫе сасӑсем).

Анук. Унта мӗн шавла пуҫларӗҫ тата? Аттесем капла нихҫан та ир тӑракан марҫӗ-ҫке. (Алӑк патне пырса).— Ах, Йеҫук, йут ҫыт сасси... Ваҫука ыйтаҫ. Темӗн, политси персе

те çитрё пулмалла. . Йеđук, ан кай, пёđđен харамалларах. Салтăн, пёрле выртса çывăрар. (Салтăнса выртаççё, алăка туртаççё).

Йеđук. Ах, харатăп...

Анук (ыйхăлла сасăпа).—Ай!.. кам унта? Мён...мён кирлё?

Сасă. Уç đасрах... уç, тетёп. Уçмасан алăка çёмёретёп. (Анукпа Йеđук йўле пилёкёнех вырăн патне лараççё).

Анук (ура çине тăрса). — Уçса кўртер-ха, мён пулё. (Уçăт. Политси кёрет).

4-МЁШ КУРĂННИ.

Политси (хыттăн). — Мёншён уçмастăр, йе пытарса пётереймерёр-и мён? (Шăрпăк çутса сётел çинđи лампăна тивертет). Мёншён тёттём çёртре лараттăр?

Анук. Мён пытарас пирён, нимён пытармалли те çук.

Политси (шыраса). Ăçта кайнă „леш“?

Анук. Мёнле „леш“? Епё „леш“сене пёлместёп. „Леш“ тесе шыврине калаççё. (Йеđук хăранипе пёр шуралса, пёр хёрелсе кайаť).

Политси. Ку тата мён туса çўрет кунта?

Йеđук (хăйулăланса). Йулташ патне килмесёр, кам патне кайас манăн?

Анук. Аттесем ёçке кайсан ларма килđё те, çывăрсах кай терём.

Политси. Есир мана „леш“ ăçта кайнине калăр. Таçталла йуптарса пёđёк сукмакпа ан çўрёр.

Анук. Хăв ыйтрăн та, çавăнпа çеç.

Политси (хăвăрт уткаласа çўресе). Калăр... đасрах... ăçта кайнă леш... пире... патшана вырăнтан... кăларас, текенни?

Анук. Кама калатăн есё?

Политси (шухăшласа). Ваđук... тата ыттисем... Епё пёрине анđах пёлеттём; вёсем... вёсем нумайăн, шуйтансем!.. Епё вёсене, епё сире! (Đăмăрёсене đăмăртаť).

Анук. Пиҕҕе килте çук. Вăл пайан иррех килтен кайнă та, халиҕҕен те килмен.

Политси. Ăçта кайнине ҡалăр, ҕасрах!..

Анук. Пĕлместĕп.

Политси (ĕнсине хыçса). Мĕнле лектерес-ха вĕсене?.. Ҕăн йăвинех килтĕм, — çук. Йе йулташсем улталарĕçи? Епĕ вĕсене!..

Анук. Мĕн тумалла вара унпа çĕрле? Тухса кайăр, пирĕн çывăрмалла.

Политси (айаккинелле). Ех, пĕтрĕ накрат. Аслăна тухас вырăнне йатлаçупа картсĕр анҕах лекет ĕнтĕ...

Анук. Кайăр, тенĕ. Ыйхăна ан татăр, пирĕн çывăрмалла.

Политси (çемçереххĕн). Киле килсенех мана пырса калăр. Пирĕн вĕсемпе сăмах пур... Каламасан, епĕ сире... Илтрĕр-и? (Тухса кайнă ҕух). — Ех, пурнăç, пурнăç! Йыта пек суланса çӳретĕн, нимĕн усси те çук...

5-МĔШ КУРĂННИ.

Йеҕук. Пĕтрĕмĕр-çке, Анук. Ĕнтĕ вĕсем пирĕн ĕçе сисрĕç, пире ĕçлеме май пулас çук.

Анук. Ех, политси, политси! Кунĕн çĕрĕн йыта пек шăршласа шыраса сӳретĕр, анҕах нимĕн тума та пултарайместăр. Ҕăнах тĕрĕс çак сăмахсем;

Çитĕ вăхăт, çĕмĕрĕç
Кивĕ тĕнҕе çĕмрĕкне,
Вара епир тăрăшса
Тăвăпăр-çке çĕннине.
Ун ҕух таса çĕр çинҕе
Куштан улпут савăнмĕ,
Хăйĕн тимĕр аллипе
Çукка, йутра тытаймĕ...
Ех, политси, политси!
Кунĕн-çĕрĕн, йытă пек,

Çӳретӗр-çке шыраса
Хыпса, çӑтса йарас пек.
Анҫах есир малашне
Çак пурнӑçа кураймӑр,
Çӗр çинҫе те, ҫухӑнсем,
Епир ӗнтӗ савнӑпӑр!..

(Аллине çӳлелле çӗклет. Ҫаршав йеррипе анаҫ).

6-МӖШ КУРӐННИ.

Вӑрман. Кайӑк сассисем илтӗнеççӗ. Ҫаршав уçӑлнӑ вӑхӑтра Ваҫукпа Мишша пырса кӗреççӗ.

Ваҫук, Çапла ӗнтӗ, епир каллех ирӗкре. (Курӑк çине выртаççӗ).

Мишша (шухӑшласа). Епир килтен кайни 4—5 çул иртрӗ. Çав хушӑра нумай хӗн-хур куртӑмӑр. Нумай хытӑ алла та çакланкаларӑмӑр. Кӑна курассӑн туйӑнманҫҫӗ. Йепле хӑтӑлса тухрӑмӑр-ха? Ӗнтӗ ӑçта кайса ӗçлӗпӗр-ши? Пӗлмен çӗре пырса тухсан, каллех хыт алла лекетпӗр, вара... Тӑван çӗр-шыва йепле çитес? Атте-аннене, йуратнӑ тӑвансене курса пулмӗ ӗнтӗ... Тата йӑмӑксем мӗн тӑваççӗ-ши? Мӗнле ӗçлеççӗ-ши?

Ваҫук. Кайӑк пулсан кайса курӑттӑмӑрҫӗ. Анҫах... Епир вӗсем çинҫен ҫасах пӗлме пултараймастпӑр... Мӗн хуйхӑрмалли пур? Çитӗпӗр-ха. (Шухӑшласа).—Пирӗн ӗç çинҫен шухӑшлас пулаҫ; атте-анне, тӑвансем пирӗн ӗçе пӑсма та пултараççӗ.

Мишша. Ӗç çинҫен? Хамӑр ӑçтине лайӑххӑн пӗлмесӗр, йепле ӗç çинҫен шухӑшлама пултарӑпӑр?

Ваҫук. Ӗç йенҫен — ӑçта пырса тухатпӑр, унта ӗçлеме пуçлатпӑр.

Мишша. Çапла. Мантӑн-и виçӗмçулхине? Йала хресҫенсем патне пырсан, вӗсемех пире пытса панине.

Ваҫук. Ун пеккисем, провоккаттăрсем, пур çĕрте те пур. Революцутсионерсем хушшинҫе вĕсем пурах... Çапах та епир унта хĕлхем сирпĕтсе хăварпă, унтан çулăм пулни пирĕн куçах курăнҫĕ. Мĕнле унта пăлхану пулнă, аставăтни?

Мишша. Çапла та... Ман шутпа пирĕн çак ĕçе пăрахса киле таварăнсан аванрах пулмалла.

Ваҫук. Сутăпаканскер! Апла пулсан сан малтанах пирĕнпе çыпăçмалли кирлĕ марҫĕ. Есĕ çак ĕç çине шанатăн пулсан, пирĕн ĕçлемесен май килмест. Партти пирĕнтен нумай кĕтет, пирĕн вăл хушшине тумалла. Çавăнпа пирĕн ҫăсрах пĕрпĕр çывăхри партти комитеҫĕпе çыхăнма кирлĕ. Вара епир ĕçе маллалла йама пултаратпăр... Сахал тăрăшман çак 4—5 çул хушшинҫе. Пăх-ха, кашни йалтах, кашни кĕтесрех пирĕн майлисем нумайланаççĕ. Çавăнпа пирĕн ĕç усăсăр йапала марри курăнсах тăрать. Хулара та хамăра тытса хупиҫҫен нумай ĕçлеремĕр, ĕçлекенсене çул кăтартса патăмăр. Халĕ кашни хапрăк—савăтрах пирĕн йаҫҫейкăсем пур. Мĕн пăшăрханса пуçа усмалли пур?..

Мишша. Есĕ çапах та ĕçлес тетĕн-и вара?.

Ваҫук. Епĕ санран ыйтам: пирĕн çулпа пыратни, пымастăни? Пымастăн пулсан, пайанах политси-шантар таврашне ман çинҫен кайса калама пултаратăн: уншăн сана çăмăллăх парĕç, ҫина кăртĕç.

Мишша (йĕрсе йарса).—Йулташ, мĕншĕн пит апла хурлатăн?.. Хура-халăх ĕçне епĕ нихçан та пăрахас çук. Епĕ сирĕнпе, сирĕн ĕç—ман ĕç (ыталаса ҫуп-тăвать).

Ваҫук. Çитĕ... Пирĕн ĕç — халăх ĕçĕ. Çавăнпа çак пуçланă ĕçе туса пĕтерме кирлĕ. (Ҫарăнса). Кăшт кăна çакăнта вырта кансан, епир малалли ĕçсем çинҫен шухăшлăпăр. Вара ăçта та пулсан пĕрер тĕплĕрех вырăн тупса каллех тăрăшса ĕçлĕпĕр... Халĕ аҫа тăсар-ха йуратакан йурăна. (Йурлать).

— Хĕвел тухать, хĕвел анать,
Ман тĕрмере пăҫ тĕттĕм.

Кунĕн çĕрĕн хуралçăсем —
Да е-е-е-ех!
Ман кантăка сыхлаççĕ...

Мишша. Ваӈук, итле-ха: пирĕн çак вырăнта пит шавлама йурамасăт.

Ваӈук. Мĕншĕн? Çук, ку ӈăтлăх вырăна пĕр ӈĕр ӈун та килес çук. Вăрман кайăк-кĕшĕке пире сийен тăвас çук! Йурла, йурла, йулташăм. Хуйха-суйхă салангăр (Малалла йурлаăт):

— Темĕн ӈухлĕ сыхласан та,
Еп çапах та тарас çук.
Ман ирĕке тухасӈĕ —
Да-е-е-е-ех!
Еп сăнӈăра татас çук...

(Ӈарăнса). Çакăнта пирĕн йăмăксем, йулташсем пулас пулсан, пире урăх нимĕн те кирлĕ мар. (Шухăшласа). Епĕ вĕсене хаӈ çакăнта курассăн туйăнаăт.

Мишша. Вĕсем йепле килме пултарĕç-ха? Епир кунтине вĕсем пĕлме пултарас çук. Таçта епир?

Ваӈук (йĕри тавра пăхкаласа). Çак вырăнта пулнă пекех туйăнаăт. Епир йалтан айакра та мар-и тен. Çавă па та, мана хаӈ çакăнта çын пур пекех туйăнаăт. (Сасăсем айакран илтĕнеççĕ.) Авă унта сасăсем илтĕнеççĕ, кунталлах çывăхараççĕ мар-и? (Итлесе). Ӈăнах, итле-ха: сасăсем пĕрмайах çывăхараççĕ. (Итлеççĕ).

Мишша (хăрасарах). Ӈăнах та унта сасăсем пур. Çын курсан мĕнле?..

Ваӈук (савăнса). Авă, вĕсен пĕвĕсем те курăна пуçларĕç... (Сасăсем йеннелле). Ан вăтанăр, ыр çынсем, килĕр пурте кунталла. Епир ирĕклĕхе шыраса кунта килсе тухрăмăр.

Сасăсем. Ваӈукпа Мишша мар-и çавсем? (Анукпа Иеӈук ӈупса тухаççĕ те вĕсем çине ыткăнаççĕ).

7-МЁШ КУРАННИ.

Ваҫук (тӗлӗнсе). Есир мӗнле килсе тухрӑр? Ӑҫта кайнӑ, ӑҫта пурнатӑр? Мӗнле ӗҫлетӗр?...

Анук. Ах, тӑвансем, мӗнле тӗлех пултӑмӑр?

Йеҫук. Епир кунта вӑрмана уҫӑлмалла килнӗҫҫӗ...

Анук. Вара таҫта айакран ҫын сассисем илтрӗмӗр...

Йеҫук. Савӑнпа та кунталла килсе пӑхас, терӗмӗр.

Ваҫук. Пире кунта курасса есир аса та илмен пуҫ?

Анук. Есӗ апла калатӑн. Епир сире йе таҫта айакра, йе тӗрмере пуҫ, тенӗ.

Ваҫук. Тӗрмере? Ҫук, хаҫ епир тӗрмере мар. Айакра, епир айакра. Пире кунта ҫын тупасси хӗнӗрех. Пӑх-ха, йепле ҫӑтлӑхра?

Анук (кулса). Никам та курас ҫук? Ха... епир сире куртӑмӑр; ҫынсем те ҫавӑн пекех курма пултараҫҫӗ. Ку вырӑн ытла шанҫӑклийех мар вара.

Йеҫук. Анук, ан аташ. Йепле айакра мар? Кунта мӗнрен хӑрамалла? Кунпек ҫӑтлӑх ҫӗре кам килтӗр? Епир те сасӑ тӑрӑх аран тупса килтӗмӗр-ҫке. Ку вӑрман патӗнҫе йал таврашӗ те ҫук пулмалла.

Анук. Ҫук. Пирӗн йал — йал мар-и? Вӑл кунтан пӗр 4 — 5 ҫухрӑмра анҫах.

Йеҫук. Ҫӑнах-и? Мӗнле тата епир вӑхӑт иртнине сисмерӗмӗр вара?

Анук. Ҫут ҫанталӑк пулсассӑн, ирӗк ҫынна мӗн кирлӗ? Ҫавӑнпа та епир вӑхӑт иртнине сисмерӗмӗр пулмалла.

Ваҫук. Ҫӑн. Пурӑннӑ ҫух пирӗншӗн ҫут ҫанталӑк ҫӑн хакли.

Мишша. Ну, йӑмӑксем, йалти пурнаҫ ҫинҫен каласа пӗлтерӗр-ха... Политси лӑпланҫӗ-и?

Анук. Политсин лӑпланасси паллах. Пирӗн ушкӑна йертсе пыракансем, есир, йалтан ҫухалсанах, вӗсем кӑштах лӑпланҫӗҫ. Ҫапах та, кашни каҫах пирӗн ҫӳреҫе патне пырса

итлеҫҫĕ (Епĕ ăна хам та сискеленĕ). Вара нимĕн сас-ҫĕвĕ ҫуккипе шăлĕсене хăйраса анҫах ҫӳреҫҫĕ.

Ваҫук. Вăл тискерсем нумайах савăнса пурнаймĕҫ. Вăхăҫĕ ҫывăхараť. (Шухăшласа). Хаҫ пĕрле ҫухне малалли ĕҫсем ҫинҫен шухăшлама та йураť.

Мишша. Ăҫта ĕҫлемеллине пĕлмен вăхăтра малалли ĕҫсем ҫинҫен?

Ваҫук (хушнă пек). Тата мĕн? Пĕр пуҫланă ĕҫе пăрахас тесе шухăшлатăн-им?

Мишша (айăплăн). Ҫакăнта епир мĕн тума пултарăпăр? Шухăшла-ха.

Ваҫук. Мĕн тума пултарăпăр? Нимĕн тума та пултараймастпăр: мĕншĕн тесен епир иккĕн анҫах. Ҫапах та, хаҫ йăмăксем кунта ҫухне, вĕсене мĕнле ĕҫлемеллине кăтартма пултаратпăр. Вĕсем пире йалти хыпарсене пĕлтерсе тăрĕҫ, епир мĕн тумаллине вĕрентĕпĕр. Вара кайран мĕн тумалли курăнса тăрĕ.

Анук. Есир мĕн хушнине епир ĕҫе кӳртме тăрăшăпăр.

Йеҫук. Епир сирĕн хыҫран, утăм йулми, пырăпăр.

Ваҫук. Тавта пуҫ, йăмăксем. Ĕнтĕ...

Мишша. Итле-ха. Ҫак вырăнта кăшт шикленмелли пур пурах.

Ваҫук. Мĕнрен шикленмелле? Йеҫук каларĕ-ҫке—пирĕн йалсăр ку ҫывăхра урăх йал та ҫук, тесе.

Мишша. Ҫав ҫĕрхута пырса сыхлакансем ҫине шанҫăк сахал вара. Ман шухăшпа вĕсем ҫакăнта та килсе тухма пултараҫҫĕ.

Ваҫук. Килсен, тупсан — мĕн тăваҫҫĕ вара? Нимĕнех те тăвас ҫук. Илсе кайĕҫ те хупĕҫ.

Йеҫук. Пĕр хупас патне пырсан вара...

Ваҫук. (Йеҫук пĕтериҫҫенех). Еп вилĕмрен хăрамастăп. Мана вĕлерсен те, вĕсем ман шухăша, ман ĕҫе вĕлерме пултараймаҫҫĕ. Пирĕн ĕҫе тăвакансем пур, вĕсем патне ҫитерĕҫ.

Мишша. Ман шутпа: пирĕн савăннь те хаҫ анҫах; çаванпа вилесси аванах мар.

Анук. Ҫарăнăр. Мĕн тавлаша пуçларăр? Ĕç çинҫен калаçар-ха, тата каç та пулса килет.

Ваҫук. Есир хăвăр пуçласа йатăр-çке... Пурĕ—ĕç çинҫен пулсан, ĕç çинҫен пултăр. Аҭăр, тытăнăр. Вăхăҫĕ çывăхараҭ, пирĕн хытă тăрăшмалла, халăха хатĕрлес пулаҭ. Хамăр ваҫҫи те хĕл йăви шырама тытăнмалла...

Мишша. Ваҫук...

Ваҫук. Ҫим-ха: еп каласа пĕтерем. Кăнтăрла май килес çук; çĕрле те пулсан, халăх хушшинҫе хамăра майлисене тупма кирлĕ. (Анукпа Йеҫук сăмах ҫĕнмесĕр итлеççĕ).

Мишша. Илтмерĕн-и ĕсĕ: „лешсем“ çĕрле сыхлаççĕ, тенине?

Ваҫук. Ех, хăравçăсем! Мĕн хăрамалли пур? Хаҫ тесен, хаҫ кайса килетĕп йала... (Сасартăк сиксе тăрса). Аҭăр, кам пыраҭ?

Мишша (ăна аллинҫен тытса). Ан аташ!

Анук (Мишшапа харăс). Ан ухмахлан!

Йеҫук. Ваҫук, сыхлан.

Ваҫук. Нимĕн те аташмастăп, ухмахланмастăп; мĕнрен сыхланас? Ну, мĕнех тăваççĕ вĕсем манпа?.. Тытса хупаççĕ... Епĕ унта та йулташсене мĕн кирлине вĕрентме хатĕр. Маншăн пурĕ пĕрех. (Ҫарăнса). Ех, хăравçăсем! Ревоҫутси тăвасшăн, халăха ирĕке кăларасшăн, политсинҫен хăратăр. Кашкăртан хăрас тăк—вăрмана та çӳрес мар! Ну, мĕнле-ха?

Пурте. Çаплах та...

Ваҫук. Çаплах пулсан, аҭăр малалла. (Лараҭ).

Мишша. Мĕнех тăвас тетĕн вара есĕ?

Ваҫук. Епĕ каларăм-çке—йалсене кайса халăха хатĕрлеме тытăнмалла. Анукпа Йеҫук пире йалти хыпарсене килекиле пĕлтерĕç, е пир вĕсене мĕн тумаллине хушăпăр. Тата, паçăр каланă пек, хамăр ваҫҫи хĕл каçма шăтăк та шырас

пулаť. Ăçта та пулсан шанҫăклăрах вырăн тупса ĕçе тытăнма кирлĕ.

Анук. Йалта лăплансах тăрсан, килте пурăнма та пулаť.

Ваҥук. Сан шухăш ҫăн. Çавăнта та, есир пире йалти хыпарсене ҫас-ҫасах пĕлтерсе тăрăр. Вара епир мĕн тумаллине курăпăр... Ну, пайанлăха ситĕ. Каçта пулса килет, килелле уттарăрах майĕпе. Мĕн тума май килнине тăвăр, ĕçе йулташсем хушшинҫе сарма тăрăшăр. Анҫах шанҫăклăраххисемпе пĕрле ĕçлĕр.

Йеҫук. Каç пулни нимĕнех те мар. Пĕрре те сирĕнтен уйрăлса кайас килмест. 5—6 çул курмасăр пурăн та, пĕр-ик сехет курсанах уйрăлас-и? (Ваҥук çине пăхса). Аса илетĕн-и пĕҫĕккĕ ҫухнехисене?

Ваҥук. Вĕсене аса илсен те, мĕн тăвас-ха ĕнтĕ. Халь унсăр пуçне те шухăш нумай, пуç çаврăнаť... (Мишшапа Анук айаккинелле кайса темĕн çинҫен калаçма тытăнаççĕ).

Йеҫук. Ваҥук, мĕн ҫухлĕ епĕ сана, пĕрле ирттернĕ вăхăтсене шухăшласа куç-çулĕ тăкатăп. Есĕ ăна курмастăн, мана маннă есĕ, шухăшăнта та епĕ çук пуҫ. (Ҫарăнса тăрса). Тĕлĕксенҫе те епĕ сана, хама сиввĕн пăхнине, манран пăрăнса çурĕнине анҫах куратăп.

Ваҥук. Йеҫук, епĕ нимĕн те манман; анҫах ман халь шухăшра вăл мар — епĕ пытарса тăмастăп. Епĕ ĕлĕк мĕнле пулнă—çаплах. Самана улшăнса кайсан, епир каллех пĕрле.

Йеҫук. Шухăшла-ха: сан çинҫен шухăшлатăп, куççулĕне саншăн йухтаратăп, есĕ лайăххăн асра та тытмастăн. Манман пулсан, мĕншĕн тата çапла есĕ? Есĕ: ĕмĕре пĕрле ирттерĕпĕр теттĕн. Халь çапла-и?

Ваҥук. Ку халь ҫеҫекĕсем анҫах, çимĕçĕсем малалла пулĕç. (Шухăша кайаť).

Йеҫук (хăраса). Вара есĕ тата нумай çапла вăхăт иртĕ тетĕн-и? Ун пек пулсан, сан паçăрхи сăмахусем мĕне кирлĕ?.. Есĕ пире—халех революцутси тăвас пек,—хăравçăсем! тесе пĕтертĕн. Халь тата апла калатăн.

Ваҫук. Çук, епё ăна мар... Савăнасси малалла пулё, терём.

Йеҫук. Ех, Ваҫук, тёлёнмелле çын есё. Пёрмай шухăшлан, пёрмай йуптарса анҫах каласан. Çавăнтанах паллă— йуратманни.

Ваҫук. Хăш ҫухне шухăшламасан та май килмест. Йуратассине, епё сана ёлёкхи пекех йурататăп. Паçăр каларăм-çке — самана çаврăнса кайтăр-ха, вара ёмёр пёрле пулăпăр.

Анук. Тусăм, каç та пулаť. Киле ҫас кайатпăр-и?

Йеҫук. Халех. (Ваҫука). Ех, савни, епир нихçан та пёрле пулаймастпăр пуҫ çав. Пёрре те ёмёр пёрле иртессён туйăнмасť. Ну, Ваҫук, сывă пул. (Ура çине тăрса). Ҫăнах та каç пулаť, кайас. Хăв каланă сăмахсене ан ман. Сыв пул, савни! Йеҫук сана йуратнине асра тыт. (Аллине параť). Татах калатăп: хаҫхи сăмахсем хамăр ăшра пулҫăр. (Анука). Анук, аťа, кайăпăр...

Ваҫук. Сыв пул, Йеҫук. (Ҫуп-тăваççё).

Анукпа Мишша (пырса тăрса). Ай-ай, епир хăпайтăмăр, вёсем ҫуп-тума та пуçланă.

Йеҫук (хăвăрт). Уйрăлнă ҫухне те ҫуп-тума йурамасť-имён?

Мишша (кулса). Пултăр-çке. Пёррелёхе каçарăпăр.

Анук (Миншана). Пирён те ҫуп-тăвас мар-и?

Мишша. Вёсем кулмаççё-и? (Анукпа иккёшё ҫуп-тăваççё).

Ваҫук. Мёншён кулас пуҫ. епир—есир мар.

Йеҫук. Сывай пулăр. Ҫипер йулăр. (Алă тытаççё).

Анук. Сывă пулăр!

Ваҫукпа Мишша. Сыв пулăр, сыв пулăр! Ҫипер кайăр. Калаписене ан манăр (Анукпа Йеҫук тухса кайаççё. Вёсем утнă майёпе Ваҫук тутипе „Аťăр харăсах, йулташсем“ калаť).

8-МЁШ КУРАННИ.

Мишша (кулкаласа). Ваҫук, ну мёнле-ха пурнăçсем? Йĕҫук—сивĕнетĕп—темест-и?

Ваҫук. Пăрах ун çинҫен каласма.

Мишша. Епĕ ăна ахалҫ анҫах...

Ваҫук. Итле-ха: ĕнтĕ епир йалти хыпарсене пĕлме пултаратпăр. Епир пĕҫҫен мар: пайан-и, ыран-и патшапа унăн тарçисене кăларса сирпĕтĕç. Унҫҫен епир таçта та пурăнма пултаратпăр.

Мишша. Вăл çапла та. Анҫах, манăн питĕ ăш вăркаť. Епир мёнле те пулсан хытă алла лекетпĕр пуҫ...

Ваҫук. Хăрас çине пирĕн малтанах çак ĕçе тытăнмалла марҫҫĕ... Äçтан та пулсан хаçат таврашĕ тупса вуласан, ĕç мёнле пынине пĕлетпĕр-ак. Çак вăрçă пирĕн ĕçе ҫылай çăмăллатма пултараť. Халăх ывăнса çитсе вăрçма пăрахĕ, патшапа унăн тарçисем вăрçасшăн пулĕç. Çав вăхăтра вара епир революцутси тума та пултаратпăр. Халăх пирĕн майлă пулаť... Ну çĕрле Хыр-кассине кайса Иванова пуштăран хаçат кӳме ыйтас пулаť. Кĕнеке-хаçатсăр епир тĕрмеринҫен те канҫăртарах пурнатпăр... Ма пирĕн куҫанас? Пурăнма май пур ҫухне пурăн, кĕреш! Кĕрешӳ вăл—пурнăç! Аťа-ха, лешне ҫăсса йарар. Вара унта мĕн шухăш кĕрĕ—йала-и, кайалла-и, мĕн пулаť? (Ирĕклĕх йуррине йурлаççĕ).

(Ҫаршав йеррипен анаť).

ИККӖМӖШ ПАЙӖ.

Политси управленийӗ. Сӗтел хушшинҫе пристäв, айкинҫе уретникпе страшниксем лараççӗ. Çӗрле.

ПӖРРЕМӖШ КУРÄННИ.

Уретник. Владислав Станиславҫ, çав халäха пäлхатакансене пирӗн мӗнле те пулсан капкäна лектересех пулаҕ.

Пристав. Лектерес пулаҕ. Анҫах мӗнле лектерес-ха?

1-мӗш страшник. Епир халҫ те çав Йаппун вäрçи иртнӗренне пекех, пӗр 7—8 çул хушши ку таврара вӗсене хупäрлама тäрäшатпäр. Нийепле те лектермелле мар. Вӗсем унта та кунта тӗрлӗрен восванисем, прокламатсисем пäрахса çўресçӗ.

Пристав. Ун пек йапаласем халҫ сирӗн алä айӗнҫе пур-и?

1-мӗш страшник. Иванов ирхине çеç Хыр-касси патӗнҫен 10—12 кӗнеке, тата 3—4 восвани тупса килнӗ.

Пристав. Пäлхатакансем пуррине шарламарӗ-и?

1-мӗш страшник. Çырма вӗçӗнҫе тупрäм, тет. Пӗр çул йуппи çав çырма урлä каçса кайаҕ, тет. Унäн çав çулпах каймалла пулнä мӗн. Çавäнта тупрäм, тет.

Уретник. Йураҕ, халäх аллине лекмен.

Пристав. Иванова халех кунта ҫӗнсе килӗр. Хуҫӗсене те илсех килтӗр.

Куçмин. Йураҕ (тухса кайаҕ).

2-МЁШ КУРАННИ.

Уретник. Вёсем киле килмесёр пурнаймаççё, пирён вёсене çав вăхăтра лектерме тăрăшмалла.

Пристав. Йе вёсен тăванёсене тытса килсе тёпĕесе пёлес. Вара мён тумалли курăнсах тăраť.

Пурте. Апла йураť. (Куçминка Иванов кёреççё).

3-МЁШ КУРАННИ.

Иванов. Честь имею представиться, Ваше ...родие!

Пристав. Ăçта-ха прокламатсисем, кёнекесем?

Иванов (парать). Акă.

Пристав (вуласа). Çёр ёç-ле-кен халăха ĕёнсе калани; Карăл Маркс вёрентни. (Ĕарăнса). Ку нимёĕ çынни пулмалла. Шуйтан пёлети тен, кам хыççăн каймаççё-ши? Нимёĕ пире пётересшён, вёсем унăн хыççăн кайаççё... Нимён те ăнланмалла мар. (Кёнекесене персе йараť; пурте тёлёнсе хытса кайнă. Пристав çўçёсене турткалаť). Йытăсем, çёр çăтмансем! Сире-и?

Уретник (ăн илсе). Ваше ...родие! Итлёр-ха: нимён шухăшламалли те кирлё мар. Пирён халех çакăнта çав пăлхатакансен йăмăкёсене (еп вёсене питё лайăх пёлетёп: — вёсем хăравçă) илсе килсе ыйтма тапратмалла. Вара епир пётёмпех пёлме пултаратпăр.

Пристав (лăпланса). Вăл пит аван шухăш. Апла пулсан, пирён вăхăта ирттерме йурамаť, халех вёсене кайса тытас пулаť. (Ĕарăнса). Кам кайса килё-ши унта? (Пурте пёр ĕёнмесёр лараççё). Ну, кам кайаť?

1-мёш страшник (сиксе тăрса). Епё, Ваше ...родие! (тухса кайма тăраť. Алăка уçсан, кайалла çаврăнса). Кунтан пкё çын иртсе кайрёç: Ĕалтунпа Каштун пекех туйёнĕёç.

Пурте (сиксе тăрса). Ĕăнах-и?

1-мёш страшник. Мёншён суйас пуĕ?

Пристав. Ҫăнах та вĕсем пулсан, хаҫ килне кайаççĕ. Сыхлăр та, ăçта кайаççĕ — кайса тытăр. (Аллисемпе сĕтеле ҫыпсса). Вара вĕсемпе мĕн тумаллине пĕлĕпĕр. (Страшниксене). Ну, курăнмалла мар кайăр та, сыхлăр. Ăçта кайаççĕ, мĕн калаçаççĕ? Кам пĕлет — те вĕсем, те вĕсем мар? (Уретнике). Есĕ, Василий Иванҫ, кунта йул. Епир вĕсене мĕн тумаллине шухăшлăпăр.

Пурте. Итлетпĕр, Ваше ...родие! (Страшниксем тухса кайаççĕ).

4-МĔШ КУРĂННИ.

Пристав. Ну, мĕн тăвăпăр-ха вĕсемне?

Уретник. Ыйтса пĕлетпĕр те, ҫăнах та вĕсем халăха пăлхатаççĕ пулсан, тӳрех тĕрмене!..

Пристав. Вăл пирĕн ĕç-и вара? Шантарсен мар-ши? Ман шухăшпа çапла пек туйанаť.

Уретник (кулса). Акă политси пуçлăхĕ! Шантарсен ĕçĕ!.. Пире мĕншĕн политси теççĕ? Мĕншĕн тесен, пирен политтиккă йĕркине питĕ сыхласа тăмалла. Революцуси вăл — политтиккă ĕçĕ.

Пристав. Кам пĕлет? Такамăн ĕçĕ—те пирĕн, те шантарсен. Еп хам та пит аванах пĕлместĕп. Ман шухăшпа — шантарсеннех.

Уретник. Апла пулсан, страшниксене те таках йатăмăр сыхлама...

Пристав. Ну, йурĕ. Лешсем килҫĕр-ха. Вара мĕн пулĕ?

Уретник. Мĕнле мĕн пулĕ? Еп каларăм: çапла тумалла. (Ик страшник кĕреççĕ). Акă çитрĕç.

5-МĔШ КУРĂННИ.

Пристав. Ну, мĕнле?

Пĕри. Епир вĕсене куçран çухатрăмăр та...

Тепĕри. Вара шырама, сыхлама та каймарăмăр.

Уретник (айаккинелле). Вёсем ниçта та кайман пулмалла.

Пристав (сиксе тăрса). Харам пырсем! Çавсене куçран çухатнă. Пуçусене йепле çухатмарăр? Йытăсем, сыснасем! Патша хыснине çёртсе пурнатăр! Сире шансан, вёсене ёмёрне те тытасси пулаймасť. (Шăлёсене шатăртаттарať). Кайăр тухса, йытăсем!

Страшниксем (хăраса). Каçарăр, Ваше ...родие!

Пристав (çиленсе). Кайăр, тенё!..

Страшниксем. Итлетпёр, Ваше ...родие! (Тухса кайаççё). Вёсене хирёç Иванов кёрет. Ўкет те хăвăртрах ура çине тăрса аллипе картус патне тытať).

Уретник (айаккинелле). Каллех ахалех пулмалла!..

Пристав. Ну, мёнле?

Иванов. Тупаймарăм... (Уретник, çилленипе, хăйне хăй ҫышса лараť).

Пристав. Пшол, вон! Йытă! (Иванов тухса кайаť). Ех, политси пурнăçё! Ёç хушатăн, тăваймаççё... Чорт побери!., (Шухăшласа). Çав политтиккă тёлёшёнҫен пирён хытă тăрăшмалла та, анҫах темшён ёçлемеççё? Пурте хытă тăрăшсан, çав революцутси тейекен йапала нихçан та пулас çук. Епир те ёмёрех хырăма сарса пурăнаттăмăрҫё... Пирёнсёр патша та пурăнма пултараймасť. Е-х! Пăҫăртăпăр вёсене, вара лăпланёç...

Уретник. Ваше ...родие! Вёсем пёри те тытса килеймеççё. Йарăр мана, епё халех...

Пристав. Мёнле-ха? Пурте килсе пётҫёр. Тупса килеймесен, иксёмёр кайăпăр. (Айаккинелле). Накрат парсан, сана çапах та лекес çук.

Уретник (тархасласа). Çак пăҫă пўлёмре ҫăтса лараймастăп. Йарăр мана!..

Пристав (хушнă сасăпа). Кай та, илсе кил! Тупаймасан, 10 тавлăк! Çавна асту.

Уретник. Çур сехетрен вырăнта пулатăп. (Тухса кайаť).

6-МЁШ КУРĂННИ.

Пристав (пёҫҫенех). Мёнле лектерес-ха вёсене?... Тен вёсем килне килсе те пурăнмаççё пуҫ?.. Çук, йала килмесёр пурнаймаççё. Кам пёлет?.. Вёсем такçанах тёрмере-и тен? Апла пулсан, пирён шырани те ахалех... Ну, тепёр йенҫен çав кирлё вёсене, сыснасене! Ытла та ёçлесшён мар. Ҫупҫăр-ха лайăхрах. Вара наҫаҫствă мёнлине тин пёлеççё! (Уткаласа çӳрет). Мёншён килмеççё-ха? Ăçта кайса путланҫёç? (Шухăша кайса лараҭ. Кураккин кёрет).

7-МЁШ КУРĂННИ.

Пристав (пуçне çёклесе). А... пёри килнё. Ну, мён калăн-ха?

Кураккин. Епё тухсанах, вёсен йёрё çине ӳкрём. Вара хыçран кайрăм (Ӳсёрет). Ҫалтун патне кёрсе тухрёç те, таçта йал хыçнелле утрёç... Епё курăнмасăр пыратăп. Вара вёсем пёр пёҫёк пӳрте, пёр карҫăк патне кёрсе кайрёç те, тем çинҫен аллисемпе сётеле ҫышса калаçма пуçларёç.

Пристав. Йураҭ... Мён калаçнине илтмерён-и?

Кураккин. Çук. Темёнле ăнланмалла мар ҫёлхепе калаçаççё. Есир каланă сăмахсене те каларёç.

Пристав. Мёнле сăмахсене?.. Леш—Кар... карăл Мар... мар... Чорт возьми! Нийепле те каламалла мар. „Карăл Маркс“. Çав-и?

Кураккин. Йе-йе. Çавă, çавă.

Пристав. Тата мён калаçаççё?

Кураккин. Темён те пёр... Калама та хăрамалла...

Пристав. Кала, кала.

Кураккин (хăраса). Нумай тăмё, теççё. Патша та вырăнтан тухса...

Пристав. Мён калаçан, ухмах? Еп сана уншăн ăçта, пёлетён-и?

Кураккин. Хăвăр калама хушрăр та...

Пристав. Ҫарăн, йытă! Кала: вара вĕсем унтах ларса йулҫĕç-и?

Кураккин. Унтах.

Пристав. Апла пулсан, халех пĕр-ик страшник ил те, кайса тытăр вĕсене.

Кураккин. Итлетĕп, Ваше ...родие! Тухса кайаҕ, уретник кĕрет).

8-МĔШ КУРАННИ.

Пристав. Ну, тытрăн-и? Ăçта вĕсем? Ех, пулă хăмпи Кайап та, тытатăп!.. Ну, мĕнле? Аван-и 10 тавлăк? Ларатăн-и?

Уретник (ҫăркуçланса). Айăплă. Каçарăр, Ваше ...родие! Ан хупăр—килте аҫа-пăҫа, выльăх...

Пристав. Ҫарăн, ҫарăн! (Тăрăхласа). Айăплă, каçарăр..

Уретник. Ҫăнах та каçарăр, Ваше ...родие!

Пристав (кулса). Ан тархасла. Каçаратăп. Малалла ун пек ан мухтан! Илтрĕн-и?

Уретник. Илтетĕп... Ну, ман мĕн тăвас? Кайас-и?

Пристав. Кăшт тăхта-ха. Нумай тăмаççĕ, лешсене тытса килеççĕ.

Уретник (тĕлĕнсе). Ҫăнах-и? Кам тупнă вĕсене, ăçта?

Пристав. Пирĕн уҫҫаскипе те пĕр Кураккин анҫах.

Уретник (килĕшсе). Пулĕ те.

Пристав. Çапла. Вĕсене илсе килеççĕ. Вара мĕн тăвăпăр-ха?

Уретник. Тепле. Темĕн тумалла? Еп каланă пек йураҕ пуль.

Пристав. Йурĕ! (Итлесе). Ҫим-ха. Сасăсем мар-и? (Стсенă хыçĕнҫе сасăсем). Хатĕрленсе ларар, килеççĕ пулас (Йусанса, сухалĕсене йăкатса лараҕ. Страшниксем Ваҫукпа Мишшана илсе кĕреççĕ).

9-МЁШ КУРАННИ.

Ваҫук (хăрамасăр). Мён тума илсе килтĕр-ха есир пире?

Пристав (йăвашшăн). Сирĕн килте ак çаксене (прокламатсисене кăтартаї) тупнă пирки, сире çав халăха пăлхатакансем майлă кайнă пуҫ тесе, ыйтса пĕлес терĕмĕр.

Ваҫук. Есир пире уншăн тытса килмен, епир ăна аван пăлсе тăратпăр.

Пристав. Çаксене кам çырнă? Есир мар-и?

Ваҫук. Епир-и, епир мар-и? Унта сирĕн ĕç çук... Епир халăхшăн тăрăшнине, епир—революционерне есир такçанах, пĕр 7—8 çул хушши пĕлсе тăратăр. Çавăнпа, урăх нимĕн те ан ыйтăр. Ыйтсан та каламастпăр.

Пристав (уретнике). Василий Иванҫ, мён каланине пĕтĕмпех çырăр. (Ваҫукпа Мишшана). Халăха пăлхатас ĕçе пăрахатра, пăрахмастăр-и?.. Пăрахсан, хăвăрах çăмăлтарах пулĕ. Ахаҫишĕн—ĕмĕрлĕх катăркăна лекĕр...

Ваҫук. Сире пĕрре каланă: нимĕн те каламастпăр, тесе (Мишша ҫĕнмест).

Пристав (Мишшана). Есĕ, тăванăм?

Мишша. Епĕ — сирĕн тăван мар. Епир йулташпа пĕр урапа çинҫех пыратпăр.

Ваҫук. Ех, харам пырсем! Пĕлĕте пăнҫăхтарса пурнатăр. Нумайах савăнаймăр, вăхăҫĕ çывăхараї. Патшана, унăн йыттисене вырăнтан кăларса сирпĕнтерĕç. Ирĕк халăх аллине йулĕ. Пур те пĕр тан, канаçлă пурăнĕç. (Пристав сиксе тăрса уткалаї). Вара епир те çĕр çинҫе савăнса пурнăпăр. Пĕтĕм халăх пĕрлешĕвĕ сывă пултăр! Революцион сывă пултăр!..

Пристав (ҫĕтресе). Ҫасрах, ҫасрах илсе кайăр вĕсене тĕрмене!..

Ваҫук. Пирĕншĕн пур çĕрте те пĕрех. Пĕтĕм тĕнҫипе ҫуралăх пĕтĕ, çак сăмахсем вырăна килĕç („Интернационал" йурлаї, Мишша ун хыççăн).

Пристав. Илсе кайăр вĕсене ҫасрах! Вĕсен сасси, вĕсен йурри ман ҫĕрене, çĕçĕпе ҫикпĕ пек, ыраттарать... (Ваҫукпа Мишшана илсе тухаççĕ). Тин пăртак лăплантăм... Тухса кайăр, манăн канмалла (Пурте тухаççĕ).

10-МĔШ КУРĂННИ.

Пристав (пĕҫҫен). Саванăн ĕнтĕ, ҫунăм. Мĕн тума шухăшланине турăм. Мана куншăн каллех аслăрах вырăн парĕç... Нумай тăмăп—кĕпĕрнатăр вырăнне ларăп!.. Çапла çав вăл политси; саккуна хирĕç тăракансене, пуринҫен ытла хăй тăшманĕсене, ҫасах хыт алла лектерет!.. Çĕрĕр ĕнтĕ тĕрмере йытăсем! Тăвăр революцутси... (ҫăркуçланса ларса). Ман ырă кунсем çитрĕç ĕнтĕ.—Саванăн ĕнтĕ, ҫунăм, саванăн! Мухтав сана, пулĕхçĕм; мухтав сана, турăçăм, мухтав сана...

(Ҫаршав анать).

ВИҪҪӖМӖШ ПАЙӖ.

Терме. Сылтăм йенҫе ҫӳреҫе, стсенă тĕпĕнҫе—алăк. Ҫӳреҫе йенҫе сарлака сак, унта ристансем выртаҫҫĕ. Ҫаршав уҫалнă вăхăтра иккĕн хытă тавлашса лараҫҫĕ.

1-МӖШ КУРӐННИ.

1-мĕш ристан. Хуҗ те есĕ мĕн кала: ҫав патшапа унăн тарҫисене пĕтереҫҫĕ, пĕтереҫҫех. Илтмен-и есĕ? Ҫак вăрҫă пуҫланнăранпа ĕҫлекенсене питĕ хĕсĕрле пуҫланă, тет.

2-мĕш ристан. Хĕстереҫҫĕ те лартаҫҫĕ. Вĕсене нимĕн те тăвас ҫук. Аса ил-ха, 1905-мĕш ҫула. Ун ҫухне мĕн пулҫĕ? Халь те ҫавăн пекех вĕсенех пĕтереҫҫĕ, урăх нимĕн те пулас ҫук.

1-мĕш. Ҫук. Ҫав тĕрлĕ хĕстернине никам та ҫăтса тăма пултарайас ҫук. Ваҫук та ҫаплах калаҗ. Вăл кунта пуринҫен те ытларах куркаланă, 5—6 ҫул тĕрмере лараҗ: унăн тухма та вăхăт ҫывăхараҗ, пĕр-ик-виҫ уйăх ҫеҫ йулнă. Вăл пĕлет; епир пĕри те хулана тухса курман. Вăл кашни кун, тенĕ пекех, тухаҗ. Ана шанаҫҫĕ. Вăл—шанҫăклине тухнă.

Мишша (пуҫне ҫĕклесе). Ваҫук ҫапах килеймерĕ-и?

1-мĕш. Ҫук-ха. Темĕн тытăнса тăҫĕ.

Мишша. Мĕн те пулсан ырри мар пуль. Пĕрре ăна тарма тытăнсан тытса питĕ асаплантарнă, тет.

2-мĕш. Вăл куркаланăскер. Ҫасах лекес ҫук.

1-мĕш. Ваҫук ҫасрах килтĕрҫĕ. Вара ҫĕн хыпарсем пĕлеттĕмĕрҫĕ. Халь фронтри ҫинҫĕн нимĕн пĕлмесĕрех ларат-

пăр... Унта çапаçу, тăвансем йунне тăкаççĕ. Вĕсене унпăн хĕрессем, пенçисем парса илĕртеççĕ. (Итлесе).—Ура сасси илтĕнет. Ваҫук килет пулмалла (Çăраççи сасси илтĕнет, алăк уçăлаť, Ваҫук кĕрет).

2-МĔШ КУРĂННИ.

Мишша. Мĕн хыпар пур? Мĕншĕн ҫас килмерĕн?

Ваҫук. Мĕн хыпар пултăр? Çапăçаççĕ... Ех, мĕн ҫухлĕ унта пирĕн пеккисен йунĕ тăкăнаť. Вĕсем пирĕн йунпа мăнтăрланаççĕ, хырăмĕсене сараççĕ...

1-мĕш. Хаçат пур-и? Мĕн çыраççĕ?

Ваҫук. Нийепле те илсе кĕреймерĕм. Тытса илҫĕç. Çырасси палла: ĕçлекенсем пур çĕрте те пăлханаççĕ. Нумайах тăмĕç, ҫуралăх сăнҫăрне татса ывăтĕç (ҫарăнса). Нимĕҫ хытă хĕстерет. Хуласене пĕрмай илет, тесе çыраççĕ... Илҫĕр хуласене! Мĕн тумалла вĕсемпе? Вăрçă ан пултăр, йун тăкăнма ҫарăнтăр... Ех, пĕтереççĕ çамрăксене. 98-мĕш çулта çуралнисене çар хушшине илеççĕ, тет. Кам кайаť? Мăн хырăмсем кайсан та, штапсенҫе йулаççĕ, пирĕн тăвансем, ĕçлекенсем çапăçма кайаççĕ... Кампа? — Мăн хырăмсемпе-и?.. Çук... Хамăрпах. Мĕншĕн?—Мĕншĕн тесен, вĕсем вырăс патшалăхĕнҫе мар, урăх патшалăхра пирĕн пекех тарăхса пурнаççĕ. Мăн хырăмсен кĕсйине тултарма çапăçас пулаť... Çук! Апла йурамасť. Пирĕн пĕтĕм вăйпа тăрăшса ĕçлемелле.

2-мĕш. Мĕнле ĕçлес тетĕн-ха есĕ? Çак хупăнса ларнă çĕрте мĕнле ĕçлес?

Ваҫук. Ĕçлеме май килет. Натçиратĕлсен хушшинҫе пирĕн пеккисем те пур. Вĕсем пире пулăшма пултараççĕ.

Пĕри. Вĕсем хушшинҫе сан паллаканнисем пур-и?

Ваҫук. Пур. Епĕ унпа нумайҫҫен каласрăм. Вăл хăй те темĕн ҫухлĕ шухăшлаť. Ку ĕçе ма пăрахмастăн тесен:—Мăн хырăм тăрантмалли çава, тет.

Мишша. Вăл пире илĕртмест-и? Ĕçлеме пуçласан, хул пуççи çинҫен пуçсем татăлса анмĕç-и?

Ваҫук. Çук. Вăл ун пек çын мар. Епĕ хулана та вăл хута кĕнипе тенĕ пекех тухса çÿретĕп. Вăл аван ĕçлет, ăна ĕненеççĕ, шанаççĕ. Епĕ ун патĕнҫе хваттирте те пулкаланă. Çĕрле пĕрмайах политтикă тĕлĕшĕнҫен ĕçлет.

1-мĕш. Апла пулсан, шанҫăк пур ĕçлеме.

Ваҫук. Вăл пире ку ĕçре нумай пулăшма пултараť. Епир унпа пĕрле пĕр восвани хатĕрлерĕмĕр те; вăл ăна çаптарма кайса паратăп, терĕ... Ан шавлăр-ха. Ман кĕсйере çав восванийĕн малтан çырнă татăкĕсем пулмалла. Итлĕр (вулаť).

— Йуратнă тăвансем, хапрăк-саватра ĕçлекенсем, çĕр ĕçĕпе тарăхакан хресҫенсем!.. Пирĕн асаттесем, аттесем темиçе çĕр çул хушши кăпитал аллинҫе хăйсен тарĕпе йунне йухтарса пуранна. Епир те вăл хĕсĕкрен хăтăлайман-ха. 1914-мĕш çулта тапраннă вăрçă нумай ĕçлекенсене ĕçрен уйăрса, нумай хресҫене суха пуçне пăрахтарса кăпиталшăн çапăçма, патшапа унăн мăн хырăмлă тарçисемшĕн йунне тăкма Кермани, Австри тата Туртси ҫиккине илсе кайрĕ. Вĕсен ашшĕсем, амăшĕсем, арăмĕсем, аҫисем нумай уксах-суккăрсем, тăлăх-туратсем выççа тăрса йулҫĕç. 1905-мĕш çулти революцутси хыççăн халăх ырă пурнăçа кураймарĕ. Çавăнпа та, халҫ мĕн пур ĕç халăхĕн çав ĕçе тума тытăнмалла. Патшапа унăн тарçисене вырăнтан сирпĕтсе влаça хамăр алла илмелле.

Есир пăлханнипе епир—тĕрмере ларакансем те, илтетпĕр. Çавăнпа та сире ҫасрах кăпитал сăнҫăрне татма ҫĕнетпĕр... Пуçланă ĕçе туса пĕтерме кирлĕ. Вăхăт çитнĕ! Пăлханса патша ирĕкне пĕтерме вăхăт çитнĕ... Пролеттариатăн влаça хăй аллине илме кирлĕ. Революцутси сывă пултăр!.. Патшапа унăн йыттисепе вилĕм!

Пурте. Революцутси сывă пултăр!

Хуралçă сасси. Ан шавлăр! Ҫарăнăр!

Ваҫук (хуҫĕсене çурса). Ку хут халҫ ĕçлекенсем хушшинҫе вĕçсе çÿрет. Нумай тăмаççĕ—пайан-и ыран-и—епир

кётнё кунсем ҫитёҫ. Вăхăҕё ҫитнё! (Щăппăнтарах). Халҫ тапранайман пулсан та, ҫак епир йаракан восванисем йăлйăл ҫунан вут хёлхемне ҕёртсе йарса пысăк ҫулăм тăвёҫ. Пётём халăх вăранё.

Пёри (пуснe ҫёклесе). Мён ҕакăлтатса ларатăр? Усси пулас ҫук.

Мишша. Ех, революционер! Йулташёсем мён тумаллине канашлаҫҫё, вăл ҫывăрать.

Ваҫук. Епир те малашне ҫакăнта пăҕхăнса [пурнас ҫук. Ҫутă кунсем килеҫҫё, епир ирёкре пулăпăр. Пролеттари патшалăхне тимёр алăсемпе ҫирёплетёпёр. Фронтри салтаксем хёҫ-пăшалёсене патшана хирёҫ ҫёклёҫ. Тупă сассисем ҫёре кисрентерёҫ, вара кăпитал ирёкё пётё! (Тупă сасси илтёнет). Мён вăл? (Пурте шартах сикеҫҫё). Йе тапранҕёҫ-и? (Ҕўреҕе патне [пырса, ăна уҫса йарать. Шавлани илтёнет, йурăсем илтёнеҫҫё).

Пурте. Мён йапала ку?

Ваҫук (итлесе). Пирён тăвансем пире хăтарма килеҫҫё. Революцци пуҫланнă... Епир кётни ҫитрё... Илтместёр-и марҫелйесă йурлаҫҫё? (Сасăсем хытăрах илтёнеҫҫё). [Ҕăнах та, авă вёсем кунталла килеҫҫё. Картишне кёҕёҫ... Авă пёри кунта ҕупать, ун хыҫҫăн ыттисем те... Хёрлё йалавсемпе... Революцци сыв пултăр! Урра!.. (Пурте унпа пёрле кăшкăраҫҫё. Ҫăраҫҫи ҫёмёрёлет, алăк уҫăлать. Нумайăн хёрлё хлаксемпе кёрсе тăраҫҫё).

3-МЁШ КУРĂННИ.

Халăх хушшинҕен пёри (тухса). Йулташсем, вăхăт ҫитрё! Пур ҫёрте те ёҫ хăлăхё тапраннă, тёрмере ларакансене ирёке кăларнă... (Пурте итлеҫҫё). Патшана кăларса сирпётнё. Влаҫ вăхăтлăх тўре-шара аллинҕе. Хаҫат ҫинҕе ака мён ҫыраҫҫё (вулать). Нарсăн 27-мёшёнҕе питёрте ёҫлекенсемпе салтаксем тапранса патшапа кăпитал влаҫне пётернё. Министăрсене тёрмене хупса пётернё. Ёҫ халăхне-

тӗрмерен кӑларнӑ. (Тепӗр хуткӑларса). Акӑ тата пирӗн йупа ӗçекен Микулай патшаран тухни çинҫен пӗлтерекен манихвест... Кӑна пӗтӗмпех вуламасан та йурӗ, кирлӗреххине вуласан çитӗ (вулаҕ)... „Халӑх лайӑх пурӑнтӑр тесе, хамӑр патшаран тухса, патшалӑха хамӑрӑн шӑллӑм асла кнеç Михаил Александрович аллине паратпӑр. Ывӑлӑмӑртан уйрӑлас килменнипе... (кулса) ну, малалла харпӑр-хӑй кил-йышӗ ӗçӗсем. Ӑна вуламасан та йураҕ“.

Ваҫук. Михаил те патшара йулас çук!.. Пире йун ӗçекен йӑх кирлӗ мар, епир хамӑр та хамӑр патшалӑха тытма пӗлетпӗр. (Ҫарӑнса). Малалла пирӗн нумай тӑрӑшмалла пулаҕ. Çак вӑхӑтлах тӳре-шарараи пире çӑмӑллӑх пулас çук... Мӗн пур шампа хырӑмсене, пирӗн вӑйпа тӑранса пурӑнакансене халӑх хӑй сут тутӑр. Пролеттари революцутси сывӑ пултӑр!

Пурте. Революцутси сывӑ пултӑр! („Марçелиесӑ“ йурлаççӗ). (Ҫаршав йерипен анаҕ).

4-МӖШ КУРӐННИ,

Урам. Тӗрме умӗнҫе. Халӑх. Салтаксем ушкӑн ушкӑнпа ҫаршав уçӑлнӑ вӑхӑтра кӗреççӗ. Тӗрме хапхине çӗмӗрнӗ Ваҫук, Мишша, ристансем тата тӗрмене кӗнӗ халӑх йурласа тухаççӗ. Халӑх шавлаҕ. Халӑх хушшинҫе Анукпа Йеҫук.

Ваҫук (халӑха лӑплантарса). Епир, тӗрмере ларакансем, çак вӑхӑта такçантанпах кӗтнӗ. Ӗнтӗ вӑхӑҫӗ çитрӗ. Малашне мӗн пур халӑх ырӑ курса пурӑнӗ... (Халӑх шавлаҕ). Итлӗр-ха!..

Пӗри (ушкӑнран). Шӑп пулӑр. Ан ҫарӑр. Мӗн калаҕ, итлер... (Шавласан, шавласан халӑх лӑпланаҕ).

Ваҫук. Ку кунсене епир такçантанпах кӗтнӗ; епир анҫах мар, пирӗн аттесем, асаттесем те кӗтнӗ. Çапах та ку таранҫен нимӗнех те тӑваймарӗç...

Анук (Йеҫука). Ваҫук мар-и çав? Сасси çавӑн пекех те, хӑй питӗ улшӑннӑ-çке. Çӳçӗсем кӑвакара пуçланӑ.

Иеҫук. Аллисене сулкаланинҫен çавăн пекех туйăнаť.

Анук (Ваҫук патне пырса). Ваҫук, есĕ-и?

Ваҫук. Анук-и? (Ҫуптăваççĕ). Ҫим-ха. Ан ҫар. Каласа пĕтерем... Тапрантăмăр пĕрре 1905-мĕш çулта, ун ҫухне вăй сахаллипе нимĕнех те тăваймарăмăр. Йытта вăрçтарсан çилленсе темĕне те çыртса çураť. Çавăн пек патшапа унăн тарçисем пире хĕсĕрлеме, пĕтерме шухăшларĕç. Нумайĕшĕ тĕрмене лекрĕç, çак кунсене те кĕтсе илеймерĕç. Çапах та пирĕн партти вăрттăн ĕçлесе халăх хушшинҫе хамăра майлисене ҫылай тупрĕ. Вĕсем пире тĕрмерисене нихçан та пĕҫҫен хăварман, пĕрмайах пулăшатҫĕç. Вара хĕлхемрен пысăк, вăйлă çулăм пулса кайрĕ. Халĕ пĕтĕм Раççей революцутси çулăмĕпе çунаť! Çапах та, пирĕн халь нумай çапăçмалла. Çав шампа хырăмсем, кашкăр майлă, йун ĕçме вĕреннĕ йăлана нихçан та пăрахас çук. Вĕсем пире пĕтĕм вăйĕпе пĕтересшĕн тăрăшĕç. Ҫăн малтан пирĕн вăрçăна ҫарса халăха ĕç патне салатмалла, вара нурнăçа йусама тытăнмалла...

Халăх. Тĕрĕс калаť...

Ваҫук. Пирĕн çакăнпах ҫарăнма йурамасť, вăхăтлăх тӳре-шара та пире усă парас çук...

Пĕри ушкăнран. Ан итлĕр ăна, вăл—полшевик (Малалла тухса). Халь епир ирĕке тухнă, вăхăтлăх тӳре-шара мĕн пур çĕре халăха пама шухăшлаť. Уҫретителни сопрани пĕтĕм халăхран...

Ваҫук. Суйаť вăл, ессерсем пурте çав йурра йурлаççĕ (Халăх пăлханаť. Салтаксем пăшалсемпе хатĕрленсе тăраççĕ). Ан пăлханăр. Халь иртерех ха. Аťăр, луҫҫă, пурте пĕр канашлă пулса патша тарçисене, шампасене пĕтерер. (Тĕрмене ҫупса кĕрет, ун хыççăн салтаксем).

5-МĔШ КУРĂННИ.

Пĕри (ушкăнран). Маттурскер пулнă, курăнаť. Анҫах çак тĕрмере ларса пĕтнĕ пулас...

Анук (варринелле тухса). Хĕр арăмсем, итлĕр-ха. Çитрĕ вăхăт, сирĕн те малашне турҫка-мелке анҫах тытмалла мар. Пурин те çĕн пурнăçа вырăна кӳме тытăнмалла. (Хĕпĕртесе). Пăхăр-ха малалла: çутă хĕвел пуриншĕн те пĕр пекех çутатаť-çке. Мĕншĕн пирĕн те ыттисемпе тан пулас мар? Ĕлĕк те нумай макăрнă; хаҫ пусмăрлакансем çук, хамăр пуçлăх пулса тăратпăр. Хамăр [пурнăçа лайăхлатма тăрăшар... Хĕр-арăмсем, пĕрлешĕр!

Халăх. Ревоҫутси сывă пултăр! (Нумайҫен шавласа тăраççĕ).

1-мĕш ристан. Ҫăнах та, çак ĕçе нумайҫҫен тăрăшса вăрттăн ĕçлерĕмĕр. Епир тĕрмере те ахаҫ ларман... (Шалта пашал сасси). Мĕн унта? (Ҫупса кĕрсе кайаť).

Йеҫук (Анука). Епир тата мĕн пăхса тăратпăр? Ĕлĕк пиҫҫесемпе ĕçленне хаҫ те вĕсемпе пулас. (Тĕрме хапхи патнелле кайаť. Шалта). Ваҫук сасси:—Еп пĕтнĕ, вĕлерĕр ăна та... Ах, пĕтрĕ-çке (Антраса ӳкет),

Анук (ҫупса пырса). Мĕн пулҫĕ, Йеҫук?.. Мĕн пулҫĕ?.. Йеҫук, Йеҫук! (Тăратасшăн).

Пĕри. Шыв илсе килĕр. (Йеҫук ҫĕнмест).

Ессер (айаккинелле). Пĕри унта, тепри кунта пĕтрĕç. Йураť. Вĕсем пурте пĕр урапапа ҫупаççĕ. (Халăха). Итлĕр-ха. Ытла пăлханма йурамасť. Епир йаланах халăхпа пĕрле ĕçленĕ, хура-халăхăн пурнăçне çăмăллатас, тенĕ. Хаҫ ĕнтĕ вăхăт çитрĕ. Патшана кăларса сирпĕтнĕ...

Пĕри. Ĕç халăхĕшĕн мĕн турăр? (Анук Йеҫука). Ех савнă йулташăм, патне çитсен савăнăçа кураймасăрах пĕтрĕн-и? Нумай çĕр çывăрмасăр та ĕçлерĕмĕр...)

Ессер (хавассăн). Хура халăх йаланах пирĕнпе пынă. Поҫшевиксем халăха пăлхатса пурăннă...

Пĕр хĕр-арăм. Пире санăн йурру кирлĕ мар... Пире ĕçре кăтартăр... (Шалта пĕрмай пăшал сасси).

Йеҫук (куçне уçса). Ваҫук ăçта?..

Анук. Кăшт тăн илет пулас-ха? Вилмен... Çапах та, хаҫ нимĕн пытарăнмасăр ĕçлеме пытăнăпăр...

Ессер (хускалса). Халăх, итлĕр-ха...

Пĕрн. Анса тар унтан, сансăр та итлемелли нумай.

Йеҫук (ура çине тăрса). Аçта епĕ? Мĕн пулнă мана? (Шалта пăшалсемпе харăс переççĕ. Хĕçĕ сассисем илтĕнеççĕ. Ваҫук йун йухтарса тухаҫ. Салтаксем 3—4 тĕрме хураҫçисене тытса тухаççĕ).

6-МĔШ КУРĂННИ.

Анук. Ах, Ваҫук!.. (Унăн патне пырса ăна йарса тытаҫ).

Ваҫук. Ку кунсене... (Сасси ҫĕтрет). Курас пек марҫҫĕ. Çапах та, халăх капиталран хăтăлнине хам куçпах куртăм. (Йеҫук аран-аран тăраҫ, ăна тытса тăраççĕ)... Куншăн 10—12 çул çаплах кĕрешрĕмĕр, Йулашкинҫен, çакă ырă кунсен пуçламăшне куртăм. Ĕнтĕ пĕр пăшăрханмасăр куççене хупса выртсан та йураҫ... (ҫарăнаҫ).

Халăх хушшинҫен (хуралçăсене кăтартса). Вĕлерĕр вĕсене...

Ваҫук (сасси ҫĕтрет). Итлĕр ман йулашки сăмахсене. (Халăх шăп пулаҫ). Çак алла илнĕ ирĕке ан пĕтерĕр... Тăрăшса ĕçлĕр... Хаҫ çапăçу нумай пулĕ. Пуршуйсем влаçа çапăçусăр парас çук. Пуршуйсене пĕтерсен тин пролеттари савăнса хăй пурнăçĕпе пурăна пуçлĕ... Пурте пĕрлешсе... тăрăшса ĕçлĕр... (Анука). Ан куҫҫан... (Халăх çине кăтартса) çаксем пурте пĕрле тăрăшăç... Ман пурăнса иртрĕ...

Йеҫук (аран-аран). Мĕнле ĕнтĕ... (сасси пĕтет).

Ваҫук. Нумай пĕрле тăрăшса ĕçлерĕмĕр... Нумайҫҫĕ шухăшра... Хаҫ ĕнтĕ маншăрах... Сыв пулăр, пурте!.. Ман иртрĕ... Пĕрлеш... се... (Ўкет те вилет).

Йеҫук (ўксе). Епĕ те пĕр... лех... (вилет).

Анук (умне пырса). Сыв пулăр пиҫҫепе тусăм! Есир пирĕнтен уйрăлтăр... Есир калана сăмахсем пире ĕçлеме пу-

лăшĕç. Малалла пĕр канмасăр, ĕлĕкхи пекех ĕçлĕпĕр. Çапăçура çар çынни пулăпăр, ĕçлемелле ҫухне куçа хупмасăр çĕр çывăрмасăр ĕçлĕпĕр. (Мишшана). Йулташăм, тăвансем уйрăлнă хыççăн, хытă тăрăшса, ĕлĕкхи пекех, пĕрле ĕçлер... Пайан пирĕнтен кунта иккĕн уйрăлҫĕç, ытти çĕрте тата нумай ун пеккисем. Вĕсем вырăнне кунта темиçе çĕр çын, темиçе пинĕн пирĕн ушкăна пырĕç. Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем пирĕнпе пĕрле ĕçлĕç...

Мишша (вилĕсем патне пырса). Ваҫук, йăмăк, сывă пулăр... Епир малашне пурте хытă тăрăшса çак ĕçе туса пĕтерĕпĕр. Пуршуаçи аллинҫе влаçа хăвармастпăр тесе, хаҫ çакăнта сирĕн умра калатпăр...

Халăх. Хамăрăн тимĕр алăсемпе хамăр пурнăçа йусăпăр...

Мишша (халăха). Ĕнтĕ вилнĕ йулташсен ӳтне хисеплер, вĕсене хамăрăн йулашки парăма парар... Пурте епир вĕсем кăтартнă çулпа кайăпăр, вĕсем каланине ĕçе кӳртĕпĕр. (Çĕлĕкне хыват, халăх пĕр çĕрелле пухăнат). Сывă пулăр, йулташсем!.. Сирĕнсĕр çак ĕçе туса пĕтерме тăрăшăпăр... (Пытару маршне йурлаççĕ. Ваҫукпа Йеҫук çинелле хĕрлĕ хлаксене витеççĕ).

(Ҫаршав йерипен анат).

ПЁЛТЕРНИ.

Çак пйессăпа пĕрле тата тепĕр пйессă „Çамрăк паттăрсем“ йатлă пйессă çапăнаť. Ăна П. Золотов çырнă.

Пирĕн склатра тата çакăн пек кĕнекесем пур:

1. Викторов. Йалти кĕвĕсем. (Сборник избранных стихотворений).

2. Курак. Сăвăсем. (Сборник избр. стих.).

3. Шаланкă. Ирхи сывлăм. (Сборн. избр. стих.).

4. Викторовпа Семенов. Ҫăвашăн илемлĕ литтераттуртĕ. (Чувашская поэзия и проза, сборник избр. стихотв. и художеств. рассказов).

Адрĕс: Москва, Никольская, 10. Главная контора Центриздата

ХАКЁ 35 ПУС.